Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

106-107 (7637-7638) №№ ✻ Юн кун, 2008 çулхи декабрĕн (раштав) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Республикăра**

## Бюджетниксен ĕç укçи 25 процент ӳсет

ЧР Президенчĕ тунти кун алă пуснă «Чăваш Республикин бюджет сферин ĕçченĕсен ĕç укçине ӳстерессi çинчен» Указĕпе килĕшӳллĕн, çитес çул бюджетниксен ĕç укçи вăтамран 25 процент ӳсет.

Указра вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене муниципалитет бюджет учрежденийĕсен ĕçченĕсем тĕлĕшпе те çакнашкал йышăнусем тума сĕннĕ. Çавна май правительство вырăнти бюджетсене финанс пулăшăвĕ пама палăртнă. Çавăн пекех предприятисене ĕç укçине индексацилеме, Раççейре вăйра тăракан ĕç укçин чи пĕчĕк виçинчен (4330 тенкĕ) кая мар виçепе ăна вăхăтра тӳлессине тивĕçтерме сĕннĕ.

**Канашлу**

## Ĕçе çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ

2009 çултан ĕç укçине çĕнĕлле тӳлессине, районта Çĕнĕ çул уявне халалланă мероприятисене ирттерессине сӳтсе яврĕç иртнĕ кунсенче культура ĕçченĕсем. Семинар ĕçне пушар хуралĕн тата шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем те хутшăннă. Вĕсем сывхаракан уява Культура çурчĕсенче хăрушлăхсемсĕр ирттересси çинче чарăнса тăнă.

Кунсăр пуçне культура ĕçченĕсем семинарта çитес çулхи мероприятисен çĕнĕлĕхĕсем çинчен те каласнă.

**Çырăнтару – 2009**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.**

**Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!**

**Районти хастар çамрăксем**

## Тивĕçлĕ воспитани, тарăн пĕлӳ парассишĕн



*Сăн ӳкерчĕкре куракан Ольга Николаевна Петрова Атапайри вĕрентӳпе культура центрĕнче ĕçлеме тытăнни виççĕмĕш çул. Чăваш патшалăх университетне вĕренсе пĕтернĕ вăл. Шкулта математикăна вĕрентнипе пĕрлех хуçалăх заведующийĕн тивĕçĕсене те пурнăçласа пырать. Ĕçре тăрăшуллă пулнишĕн ăна пĕрле ĕçлекенсем те, вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те хисеплеççĕ.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## Чăваш Республикин бюджет сферин ĕçченĕсен ĕç укçине ӳстерессi çинчен

Чăваш Республикин бюджет учрежденийĕсен ĕçченĕсен социаллă хӳтлĕхне вăйлатас, бюджет сферин учрежденийĕсенче ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ тытăмсене ĕçе кĕртес тата вĕсен ĕçченĕсен ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕллевсемпе çапла йышăнатăп:

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

2009 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Чăваш Республикин бюджет учрежденийĕсен ĕçченĕсене ĕçшĕн тӳлемелли укçа-тенкĕ калăпăшне, вĕрентӳ тата сывлăха сыхлас ĕç сферинче патшалăх паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхне ӳстерме пулăшакан пилотлă проектсене маларах пурнăçа кĕртнине шута илсе, вăтамран 25 процент ӳстермелле;

Чăваш Республикин бюджет сферин ĕçченĕсен ĕç укçине ӳстернипе пулакан тăкаксене укçа-тенкĕпе тивĕçтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

2. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене муниципалитет пĕрлĕхĕсен бюджет учрежденийĕсен ĕçченĕсен ĕç укçине çак Указăн 1-мĕш пунктĕнче асăннă виçепе ӳстерессi çинчен йышăну тума тата тăкаксене укçа-тенкĕпе кирлĕ пек тивĕçтерме сĕнес.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене çак Указа пурнăçа кĕртме бюджетсен хушшинчи трансфертсен шайĕнче вăхăтра укçа-тенкĕ пулăшăвĕ пулмалла.

3. Пурлăх производствин сферинче ĕç паракансене ĕçлекенсен ĕç укçине индексацилесси çинчен çавнашкал йышăнусем тума тата ĕç укçине вăхăтра тата Раççей Федерацийĕнче вăйра тăракан ĕç укçин чи пĕчĕк виçинчен кая мар виçепе тӳлессине тивĕçтерме сĕнес.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2008, раштав, 22, 128 №.

**Уяв çывхарать**

## Президент елкине каяççĕ

Декабрĕн 25-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче иртекен Президент елкине пирĕн район ачисем те çитсе курĕç. Унта кайма 14 çула çитмен 53 шкул ачине суйланă. Вĕсем пурте пултаруллă та талантлă, обществăлла организацисенче активлăхпа палăрса тăракан ачасем.

Декабрĕн 30-мĕшĕнче иртекен Президент елкине вара районти тăлăх ачасем, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнисене, инвалид ачасене, нумай ачаллă тата сахал тупăшлă çемьери ачасене илсе кайма палăртнă.

Президент елкине каякансене çĕнĕ çул парнисем те кĕтеççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Çĕнĕ çул умĕн**

## Ку «теттесене» ачасене сутма юрамасть

Республикăра, пирĕн районта та декабрĕн 20-30-мĕшĕсенче «Пиротехника» комплекслă профилактика операцийĕ пырать. Çак тапхăрта шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем пиротехника сутакансем асăннă тавара тĕрĕс сутассине, упрассине тимлĕн тĕрĕслесе тăраççĕ.

Каламалла, çак «теттесене» 14 çула çитмен ачасене сутма юрамасть. Сутуçăсен лицензирен пуçласа пиротехника изделийĕсене упрамалли ятарлă сейфсем таранах пулмалла. Вырăсла çырнă этикеткăсем те тавар çумĕнчех кирлĕ. Çак изделисене ятарлă куçса çӳрекен киосксемпе магазинсенче çеç сутма юрать.

Ытти йышши киосксенчен пиротехника япалисене ачасем туяннине курсан, аслисен асăрхаттарăвĕ сутуçăсене те, туянакансене те ытлашши пулмĕ. Вĕсемпе усă курса суранланнă ачасем малтан сахал мар пулнă. Аслисен те асăрханулăх пирки манмалла мар.

**Т. ТЕРЕНТЬЕВА, районти шалти ĕçсен пайĕн лицензи тата ирĕк паракан ĕçсен уйрăмĕн инспекторĕ.**

**Паянхи номерте – Президент Çырăвĕ**

## Хăвăрăн шухăшăрсене пĕлтерме пултаратăр

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Чăваш Республикин тăваттăмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн вун çиччĕмĕш сессийĕнче Патшалăх Канашне янă «Чăваш Ен çитĕнĕвĕ – кашнин пуçарулăхĕнче» Çырупа тухса каласрĕ. Хаçатăн паянхи номерĕнче эпир хаçат вулакансене çак Çырупа паллаштарас терĕмĕр. Мĕншĕн тесен унта мĕн калани республикăра пурăнакан кашни çыннах пырса тивет.

Çавна та каласа хăваратпăр. Çак Çыру пирки хăвăрăн шухăш-кăмăлăрсене редакцие çырса пĕлтерме пултаратăр. Вĕсем хаçат страницисенче кун çути курĕç.

**Шкул ачисем валли**

## «Эпир» кăларăм




Калайкасси шкулĕнче вĕренекенсем «Хыçалти парта» хаçат кăларнине пирĕн вулакансем те пĕлеççĕ. Çамрăк журналистсене район хаçачĕн страницисенче те вырăн пама шутларăмăр.

Паянхи номерте вĕсем хатĕрленĕ пĕрремĕш кăларăм пичетленет. Районти ытти шкул ачисене те çак ĕçе хутшăнма чĕнсе калатпăр. Ачасен хăйсен тĕнчи, пĕрле сӳтсе явмалли сахал мар-тăр.

Ăнăçу сунатпăр!

**Пирĕн интервью**

## Сĕт тата сĕт продукцийĕ пирки

***Иртнĕ кунсенче Раççейре «Сĕт тата сĕт продукцийĕн техника регламенчĕ» федераллă саккун вăя кĕчĕ. Пылак шыв сĕтрен хаклăрах пулнă лару-тăрăва ял çынни майлă çавăрайрать-и вăл? Çак ыйтупа район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе - ял хуçалăх пайĕн ертӳçипе Владислав Кириллович АНАНЬЕВПА тĕл пулса çĕнĕлĕхе ăнлантарса пама ыйтрăм.***

– Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ умĕн çак саккун ĕçлеме пуçлани пирĕн хресченсене туллирех кăкăрпа сывласа илме пулăшмалла. Саккун никĕсĕнче – сĕте сĕт напитокĕсенчен уйăрасси, çынсен пурнăçпа сывлăхне упрасси, тавар туянакана тавар пахалăхĕ пирки иккĕлентермесĕр тулли информаци парасси. Саккунра сĕт пирки çапла ăнлантарнă: сĕт вăл пĕр е ытларах ĕнерен сумалли тапхăрта талăкра пĕрре е ытларах суса илнĕ, унран нимĕн те уйăрса илмен тата нимĕн те хушман продукт. Сĕте сывă выльăхсенчен илмелле. Тин кăна пăруланă ĕнесенчен 7 талăкра, чирлĕ ĕнесенчен илнĕ сĕте апат-çимĕçре пачах усă курма юрамасть. Чĕрĕ сĕтре çу хисепĕ 2,8-6,0 процент, белок хисепĕ 2,8 процентран кая мар пулмалла. Сĕтре тĕрлĕ хутăшсем пулмалла мар. Ăна шăнтса усă курма юрамасть.

Сĕте суса илсе тасатнă хыççăн 2 сехет хушшинче 4 градус (2 градус сахалрах е ытларах та юрать) таран сивĕтмелле. Чĕрĕ сĕте çак температурăпа 24 сехет упрама юрать. Сĕте сивĕтекен ятарлă машинăпа çеç усă курмалла.

Сĕте тата сĕтрен кăларакан продукцие Россельхознадзорпа Роспотребнадзор тĕрĕслесех тăрĕç.

Техника регламенчĕн 36 статйин 1 пайĕпе килĕшӳллĕн кашни продукци çинчех вырăсла шултра çырнă этикетка пулмалла.

Саккунпа килĕшӳллĕн «Ĕçмелли сĕт» тесе чĕрĕ сĕтрен е сĕт продукчĕсенчен хатĕрленĕ 9 процентран кая мар çу хисепĕллĕ продукта калаççĕ. «Сĕт напитокĕ» – концентрациленĕ е сгущенка сĕтрен, е типĕ сĕтпе шывран хатĕрленĕ продукт.

Пасарсенче промышленноçра хатĕрлемен сĕте ун тĕлĕшпе ветеринари документчĕсем пулсан чĕрĕллех сутма ирĕк параççĕ. Чĕрĕ сĕт сутаканăн тавар туянакансене ăна вĕретмелли пирки асăрхаттарни кирлĕ.

Малалла сĕтĕн виçĕ сорчĕ çеç юлать. Унччен высший, 1-мĕш, 2-мĕш сортлă тата сортсăр сĕтсем пулнă пулсан, малашне сортсăр сĕтсене тирпейлеме кĕртмеççĕ.

Сĕтре антибиотиксем пулмалла мар. Вĕсем вара маститлă ĕнесене сыватнă чух сĕте бракламалли вăхăта пăхăнманнипе продукцие лекеççĕ. Çакна пăхăнасси – сĕт туса илекен ял хуçалăх предприятийĕсемшĕн тĕп правилăсенчен пĕри.

Çӳлерех асăнни сĕт туса илес ĕçре çĕнĕ технологисемпе ĕçлеме хистет. Кунпа пĕрлех фермăсенче санитари правилисене пăхăнасси пĕрремĕш вырăна тухать. Кунта вара пирĕн хуçалăхсен ĕçлемелли пайтах. Çавăнпа пĕрлех ĕнесем валли апат хатĕрлесси те пахалăх ыйтăвне мала кăларса тăратать.

Сĕт – ял хуçалăх производство кооперативĕсене куллен тупăш паракан çул-йĕр. Ăна алăран вĕçертес мар тесен сĕт тата сĕт продукцийĕн техника регламентне çирĕп пăхăнмалла пулать.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Райпосене паянхи куна Муркаш тата Етĕрне сĕт завочĕсенчен сĕт продукцийĕсем çĕнĕ упаковкăсемпе мар, вкладышсемпе килнĕ. Унта çу хисепне, сĕт составне, сĕтри йӳçĕклĕх микроорганизмĕсене, çĕпре хисепне тата энерги хаклăлăхне кăтартнă.

**Юбилей**

## Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аннене, хĕрĕме, асаннепе кукамая – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Валентина Владимировна НИКОЛАЕВАНА** паянхи 50 çулхи юбилейпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Эсĕ пурришĕн савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ашшĕпе амăшĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 4 мăнукĕ, тăванĕсем.**

---

Юратнă аннене, ырă кăмăллă кукамая, асаннене, пирĕн хаклă çыннăмăра – Торинкасси ялĕнче пурăнакан **Клавдия Федоровна СЕРГЕЕВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, вăй-хал, тулли телей сунатпăр. Санăн ăшă кăмăлу нихăçан та ан иксĕлтĕр, Турри сана нихăçан та ан пăрахтăр, çирĕп сывлăх пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**